


Ҫавра сĕтеле килнĕ шкулсене Ҫĕнĕ ҫул ячĕпе чунчĕререн саламлатпăр. Ҫитес ҫул пирĕн хаҫатпа тачă ҫыхăну тытасса шкул ачисене канăҫ паман ыйтусем ҫине хуравсем тупасса шанатпăр. Эпир хамăр пуласлăха хамăр тăвасса, ҫамрăксен кулленхи пурнăҫĕпе ҫыхăннă йывăрлăхсене хамăрах татса пама пултарасса ҫирĕп ĕненетпĕр. Эпир пĕрле пулсассăн пурнăҫ кустăрмине хирĕҫ те тăма пултаратпăр. Пĕрлĕхре — вăй!!!

# ҪĔНĔ ҪУЛТА «ХЫҪАЛТИ ПАРТА» ХАҪАТПА!

## МАСТЕР—КЛАССЕМ КИРЛĔ

Ҫавра сĕтеле килнĕ ҫамрăк журналистсем кашниех хăйсен пултарулăхĕсене кăтартрĕҫ. Вĕсен палăртнă темăпа 10-15 минут хушшинче материал ҫырмалла, кайран вара хăйсен текстне компьютерпа пичетлемелле пулчĕ. Чи интереслĕ материала Шурча шкулĕн «Ассорти» хаҫатăн ҫамрăк журналисчĕсем ҫырчĕҫ — Надя Трофимовăпа Ирина Саватеева /2-3-мĕш страницăсенче/. Турай шкулĕнчи Валя Степановăпа Света Михайлова компьютерпа туслă пулни курăнчĕ /пичетлеме ăста/. Хăш-пĕр ачасем Калайкасси шкулĕнче кăна компьютерпа пĕрремĕш хут усă курса хăйсен тексчĕсене пичетлерĕҫ. Мастер-класс ирттернĕ хыҫҫăн ачасем ҫакăн пек пĕтĕмлетӳсем турĕҫ: 1. Ҫамрăк журналистсене компьютерпа усă курса материалсем пичетлеме вĕрентмелле; 2. Хаҫата калăпласине /версткăна тата дизайна/ хăнăхтармалла; 3. Районта иртекен ҫамрăк журналистсен курсĕсене компьютер класĕнче ирттермелле; 4. Мастер-классем ирттернĕ чух профессионаллă журналиста материала мĕнле пухса хатĕрлемеллине вĕрентме чĕнмелле.

***Редакци***





***«ХЫҪАЛТИ ПАРТА» хаҫатăн черетлĕ номерĕ кăрлачăн 18-мĕшĕнче тухать.***

**12 страница, А4 формат. Ҫырăнма васкăр.**

Паянхи куна Очăкасси тата Шатракасси шкулĕсем хаҫата материалсем ярса пачĕҫ. Вĕсем ҫинчен район пĕлĕ. Ытти шкулсенче тен цензура кĕртнĕ, е тоталитарлă администраци?!

## УРА! ҪĔНĔ ҪУЛ!

Раштав уйăхĕн 29-мĕшĕнче пирĕн шкулта елка иртет. Ҫав кун 3-мĕш классран пуҫласа 9-мĕш класс ачисем елкăра савăнĕҫ. Пирĕн шкулта кашни ҫулах аслă классем елкă кунĕнче ачасене, куракансене саламлаҫҫĕ. Тĕрлĕ хаҫатсем кăлараҫҫĕ, сăвăсем ҫырса савăнтараҫҫĕ. Пирĕн шкул ачисем елкăна питĕ савăнăҫлă ирттерсе яраҫҫĕ. Ман шутпа, Ҫĕнĕ ҫул кунĕ чи савăнăҫлă кун.

**Алексей ИРЗАКОВ,**
**Б-Карачкино шкулĕ,**
**8-мĕш касс.**

## ШАТРАКАС ШКУЛĔНЧИ ПУЛТАРУЛЛĂ АЧА

Пултаруллă ача-мĕнле ача-ши? Ман шутпа, пултаруллă ача вăл пур ĕҫрте те пултаруллă: лайăх вĕренет, пур мероприятисене те хутшăнать, пур ĕҫрте те маттур. Пирĕн шкулта ҫавăн пек ачасем нумаях мар. Вĕсенчен пĕри Диана Башмакова. Ҫак хĕр ача питĕ маттур. Вăл ҫиччĕмĕш класра вĕренет. Уроксенче «5», «4» паллăсем кăна илет. Диана темиҫе хутчен стипенди те илнĕ. Унăн малашлăхĕ ăнăҫлă пуласса шанатпăр.

**Таня ГУСЕВА, Шатракас шкулĕ, 8 класс.**

Проект авторĕсем:
Александр Степанов,
Владимир Кожевников,
Эльвира Портнова

Редколлеги членĕсем: Евгений Ефстафьевич Ерагин, Светлана Васильевна Асамат, Ирина Венедиктовна Осипова, Валерий Семенович Рубцов, Николай Григорьевич Ванеркин

Хаҫата «Сĕрпӳ издательство ҫуртĕнче» пичетленĕ. Адрес: Ҫĕрпӳ хули, Просвещени ур. 41 Тираж: 999 экз. Заказ:

ХЫҪАЛТИ ПАРТА Кайри маха!

Редакци адресĕ: 429541,Чăваш Республики, Муркаш районĕ, Калайкассинчи вăтам шкул. Хаҫата шкулăн компьютер класĕнче калăпланă. *электрон адресĕ:* interhypar@mail.ru

Бильд-редактор: Александр Степанов.
Тĕп редактор: ВладимирКожевников
Редактор ҫумĕ: Эльвира Портнова. Корреспондентсем: Лариса Осипова, Таня Шарикова, Оля Кошкина, Дима Соколов